29-169

ХУММА ÇЕМЕНĔ.

# ТИМУШ

ЧĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
Шупашкар — 1929 ç.

# Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ

## КĂЛАРНĂ АЂАПĂЂА КĔНЕКИСЕМ:

**А. Левкур.** Виçĕ ăру . . . . . . . . . 15 пус.
**Л. Котенко и В. Смирнов.** Пионера шкулта йертсе пыраканни . . . . . . . . 18 „
**А. Волков.** Йалти пионерсене пулăш . . 6 „
**А. Волков.** Пионерăн килйышĕнђи ĕçĕсем. 6 „
**Трупина М.** Çĕнтерђĕ . . . . . . . . . 30 „
**А. Сейфуллина.** Тивĕççĕр ĕç тăвакансем 30 „
**Неверов А.** Ташкент хули—тулăх хула 60 „
**Н. Ляшко.** Сăнђăр йурри . . . . . . . . 25 „
**Липина.** Минкка Курпунĕ . . . . . . . 17 „
Вăрман халапĕ . . . . . . . . . . 12 „
**Адалис и Сергеев.** Инти ђиккинђе . . . —
**Лесная.** Хĕвелпе уйăх тĕттĕмленни . . . 22 „
**Никандров.** Пулăçсем . . . . . . . . 25 „
**Виктор Гюго.** 93-мĕш çул . . . . . . . 42 „
**П. Дорохов.** Петĕук Илйиђ патне кайни . 20 „

Çырса илмелли атрĕс:
**Чебоксары, Красная площадь,**
**книжн. магазин „Новая Книга“**

ХУММА ÇЕМЕНĔ

# ТИМУШ

(„Аҫа ҫухнехи" повĕçе кĕскегсе çапни)

ҪĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔ
ШУПАШКАР—1929 ç.

Типография
«ЧУВАШСКАЯ КНИГА»
Чебоксары, Чувашская 6.

Чувашлит № 169. Заказ № 735 Напеч. 3000 экз.

1.

Хулах çуртĕнҗен шутласа виç-тăват тăваткал хăвар-сассăн, аслă урампа пынă җух, пĕр кивĕ, лугра пÿрт çумĕпе иртсе каймалла. Пÿрҗĕ, улăмпа вит-нĕскер, урамалла җалăша пуçланă. Пурĕ виçĕ җÿреҗеллĕ. Хăлтăр-халтăр курăнса ларать.

Çав пÿртре акă мĕн иртенпех майсăр киҗем тăрать. Тĕпелти сак çинҗе хуçи арăмĕ кивĕ кĕрĕкпе витĕннĕ те, икĕ çулхи хĕр аҗине ыталаса, çывăрас килмен çĕртенех çывăрнă пек выртать. Җас-җасах пĕр айăккинҗен тепĕр айăккинелле çаврăна-çаврăна илет. Кашни хут çаврăн-массеренех:

— Ай-ай-й-й!.. Ех, пурăнă-ă-ç-ç!!! тесе, вăрăмăн сыв-ласа, йăнăша-йăнăша йарать.

Пит-куçĕ кăн-кăвак кăвакарса кайнă. Хăш çĕрте çăмах пек мăкăҗсем сике-сике тухнă. Ури вĕçĕнҗе вуник çулхи ывăл аҗи, сĕтел çине җавсаланнă та, уçăлса выртакан кĕнеки çинелле хурлăхлăн пăхса, пысăк çын майлах тĕлĕрсе ларать.

Хĕр аҗи, темскертен хăраса, шарт siксе вăранать те:

— Анне-е-е! тесе хытгăн çухăрса илет.

— Çывăр, хĕрĕм, ан хăра.. Аçу çук халĕ,—текелесе, амăшĕ ăна аҗашлать, каллех çывăрттарса йарать.

Кăнтăрла çитнĕ. Пÿртре нимле пуçтару-тăву çук. Кăмакине ывăл аҫи пасăртарахах хутса кăларнă. Унтанпа вăл тула тухса выҫăхсене апатланă. Пĕр çĕклем шыва кайса килнĕ. Йур хырнă. Тата ытти вак ĕçсем те тунă. Тултан ĕçлесе кĕрсессĕнех, сак çинҫе выртакан а◌ăшне пăхса-а илҫĕ. Куçĕсем шывланҫĕç. Сассине кăлармасăр макăрма тытăнҫĕ. Çамрăкскер, шурă кĕпе çаннипе куç-çулĕсене шăлса типĕтрĕ. Унтан сентре[1]) çинҫен пĕр вырăсла йурă кĕнеки—„Песенник"—илсе, сĕтел хушшинҫе тек тĕлĕрсе ларма тапратрĕ.

Халĕ те вăл, йурă кĕнеки çине пăхса, çав çавах, пасăрхин пекех тĕлĕрсе ларатĭ. Урайĕ шăлăнман. Турҫкипе ухваҫĕ хăйсен вырăнҫе мар. Тумтирĕсем те кăнтăрлахи пек пĕр çĕрелле пуçтарăнман. Сĕтел çинҫе каçхи апат йулашки çаплипех тăратĭ.

Çывăракан пĕҫĕк хĕр аҫи каллех, никам хăратмантивмен çĕртенех, те тĕлĕкре аташнипе:

— Анне! Анне! тесе, темле тăрук-тăруккăн çухăрса илет.

Амăшĕ çаплах йăпататĭ, аҫашлатĭ.

— Çывăр, çывăр... пÿртре аçу çук халĕ, ан хăра, тет.

Хĕр аҫи каллех çывăрса кайатĭ.

Сĕтел хушшинҫе пĕҫĕк ывăлĕ салхуллăн тĕлĕрсе ларнине амăшĕ курах карĕ. Хытă çытарĕ çинҫен пуçне хĕн-асаплăн хăпартса тăрса ларҫĕ.

— Ах, ывăлăм... Тимуш! Есĕ те çамрăклах хуйхăрма ан вĕрен-ха. Ку ухмах аçу тем кăтартĕ ĕнтĕ. Каç çаплах ман çине уха-уха сикрĕ. Вĕлерет пулҫ терĕм. Тÿсмелле мар. Пур çĕртен те сураççĕ, ыратаççĕ... Ех, турри! Ăçталла тартăн-ши есĕ ман тĕлтен? Ним айăпсăрах, таса

[1]) Çÿлĕк.

çĕртенех мĕншĕн асаплантаратăн-ши мана-а... Ним тума, нимле ђарма çук. Кашни ўсĕрĕлмессеренех çапла хĕнехĕнех ватăлтаратă-çке ĕнтĕ усал аçуу... Ех, çутă кунăм! Есĕ те маншăн хуралтăн пулатă. Пĕтрĕм епĕ. Пĕтĕм çамрăк ђухнехи сăн-сăпатăма, тем тĕрлĕ хитре кĕлеткеме çак киле килсе пĕтертĕм-çке...

Амăшĕ ĕсĕклесех макăрса йаратă. Тимушĕ ђарма хăтланатă.

— Анне! Ан макăр, тет.

Амăшĕ ђарăнмастă. Сăмахне калатă те макăратă. Калатă те макăратă. Ăна кура пĕђĕк ывăлĕ те тўссе тăраймарĕ: куççулĕсене шăпăр-р йухтарса ангарђĕ. Анђах çапах йĕрсе йамарĕ хăй.

Хĕр ађи те ак вăраннă. Амăшĕ ăна çаплах ађашлатă. Анђах нихăçан та вăл пĕђĕк хĕрне: ой-ой, ађине, паппине! тесе ађашламастă. Пĕрмайах çакăн пекле каласа сывăрттаратă:

— Ан макăр, Матĕрне хĕрĕм... пĕђĕк хĕрĕм! Пўртре никам та тивекен çук. Аçу таçта кайнă. Ан макăр, сывăр, тет.

Пĕрмай ĕçсе килсе амăшне хĕненине пĕле пуçланăраппа, пĕђĕк Матĕрне ашшĕнђен пит хăракан пулнă. Ун пек шуйхашнă каç хыççăнхи кăнтăрласем вăл нихçан та канлĕ сывăрмастă: сасартăк шарт-шарт siксе вăрана-вăрана кайатă.

Йĕрсе ывăннă амăшĕ те, хĕр ађи те çĕнĕрен ăйăхласа карĕç.

Пўртре çав çавах киђем.

Тимуш ак амăшĕ вырăнне ĕçлеме тапратрĕ: урай шăлђĕ, тумтирсене пуçтарђĕ, сĕтел çинђен тасатрĕ.

Пўрт ăшне тин илем кĕђĕ.

2.

Амăшěпе пěђěкки вăрансассăн:

— Анне! Иртри хаљ ыратни? тесе ыйтрě ађа сассн. Амăшě вара çемçен кăна кулса кăтартрě.

— Ах-тур есě, ывăлăм... Хăвăн аннўне çамрăклах хěрхенме пелетěн çак, терě.

Çапла çитěннě пирěн Тимуш. Пиллěкре ђухне вăл, кăмака çинђен мăшкăлтăк шыв хуранě çине ўке парса, пуç ђашкине амантнă. Аманнă йěр палли хаљ те пытанман. Хаљ те вара, суран вырăнне тытса пăхсан, Тимуш хăйне хăй хěрхенсе илет. Ўке панă ђух йепле уласа макăрнине те лайăх астуса илнě пек пулаť. Çапах та, ун çинђен нумай шухăшласа тăмасť. Ђасрах урăх шухăша кайаť. Сакăр-тăхăр çула çитсен, Тимуш вунă пус пăхăр укçалла сысна кěгўне кунла кěрěшсе кайнă. Сысна кěтěвěнђе çўренисене аса илсенех, ăна вара тем те шухăша килет: хура пусăра тислěк куписем çинђе выртса çўренисем; курăксем хушшинђе, хěрў кунта шăрђăксем: ђěрик-ђěрик-ђěр-ђěр-р-р! ђěриклетсе йурланисем; çарансемпе шыв хěррисенђе, ахаљ тăрасран, çěçěпе çерем касса ватнисем; вăрăм пушăпа, выљамалла, шарт! шартлатгарса пěтěм вăрмана йанăрттарнисем; хунав çăкапа курăк кěпçисенђен тунă шăхлиђăсемпе ташă-йурă кěввисем каланисем,—пурте, пурте аса килеççě çав. Тимуша хěпěртетгерсе йараççě. Унăн шухăшě, ун пек ђух, уйаллах, ирěкеллех вěçме тапратаť. Çамрăкскере тахăш пěри, куçпа пăхса та курăнманскер,-çапла каланă пекех туйăнаť:

— Тем лайăх мар килте пурăниђђен, уй-хиртех лайăх çўреме. Сывлăш та уçă унга. Ахаљ те ирěк çав!.. ирěк! тенě пек пулаť.

Тимуш ҫавӑнтах вара иртнӗ ҫулхипе виҫӗм ҫулхи ҫу кунӗсене аса илет. Каллех ӑна: хӑй пек йулташӗсемпе хурӑн ҫырлине ҫӳренисем; пухнӑ пек ҫырисене пасартан пасара ҫӳрекен тутарсене ҫул ҫинҗех вунӑшар, вунҫиҗҗӗшер пуса сута-сута йанисем; укҫипе амӑшӗ хӗрлӗ хӑмаҗ кӗпе туса пани; унтан татах, хурӑн ҫырли пӗтерехпе, ҫӗр ҫырлипе хӑмла ҫырлине ҫӳренисем; ҫӗмӗрт ҫинисем; ҫырларан тавӑрӑннӑ җух, вӑрман ҫумӗпе йухса выртакан шыв авӑрӗсенҗе, пулӑсем пекех җӑмпӑлтатнисем; кӗтӳ-кӗтӳпе таракан пулӑсене ним ахалех, выҗамалла хӑваласа ҫӳренисем аса килеҫҫӗ. Пуҫра каллех «ирӗк», «ирӗк» тенӗ йевӗрлӗ сӑмахсем туха-туха тӑраҫҫӗ.

Ах... Аппӑшӗ йунлӑ вар-виттипе асапланса вилнине те Тимуш пит ҫирӗп астуса тӑрать. Наҫтук ун җухне вуннӑра пулнӑ. Пӗр ерне хушши пӗрмай йунлӑ-хутӑш йухтарса пурӑнҗӗ вӑл. Апат тавраш ҫимесҗӗ. Лупас айне кайаҗҗӗ те: Анне, ан кай-ха! тесе, макӑра-макӑра йараҗҗӗ.

Сыватас тесе, Наҫтука амӑшӗпе Хӗветле кумми тем те туса пӑхрӗҫ. Пилеш хупписем ҫитерҗӗҫ. Кӑмака шӑлмалли мелкепе алӑк йанахне ҫуса илнӗ шыва ӗҫтерҗӗҫ. Темле курӑк та вӗретсе паҗӗҫ. Наҫтук ҫапах җӗрлеймерӗ. Вӑл пӗтнӗҫем пӗтсе пыҗӗ. Тӗпелти сак ҫинҗе җипер выртнӑ ҫӗртех, авкаланса хуҫланма тапратрӗ.

— Йепле те пулсан җӗртеймӗр-ши? җӗртеймӗр-ши? тесе ыйтнӑ пек, пурин ҫине те йӑваш-тулли куҫсемпе тилмӗре-тилмӗре пӑхрӗ. Пӗтӗм вӑйне пухса йулашкы хут ҫӳлелле авкаланса илҗӗ. Аллисене җӑмӑртаса кӑкри ҫине ҫапӑнтара-ҫапӑнтара, вирлӗн иккӗ-виҫҫӗ сулса йаҗӗ те, урисене җӑсса пӑрахрӗ, шӑпӑрт пулҗӗ: сасси ҫӗтрӗ, сывлӑшӗ тухрӗ... Наҫтук вилҗӗ.

3.

Ђирĕ йерекенскер пулнă. Тéлĕнмелле: Тимуш ђипђиперех çăлăнса йулнă унтан! Усал есрелĕ Наçтук ђунне кăна илсе карĕ. И-и! Пĕлесђĕ ăна: мĕнле пулса тăђĕ-ха вăл—ђипер калаçакан-тăваканскерех шăпăрт вилсе выртасси? Çыннăн ђунĕ ђăнах пур-ши унăн, е? Мĕн пек-ши вăл?.. Ађа пуçне çавăн пек пысăк шухăшсем аптăратса çитерпĕ пулнă. Анђах ун пирки ăна пўртри çынсенђен нихăш те лайăххăн тăнлантарса парайман. Хăлхана пĕр çакнашкал сăмахсем кăна илтĕне-илтĕне кĕнĕ: ђун вăл, шăши йевĕрлĕ пулса, вилĕ патĕнђех ђупкаласа çўрет. Ăна урăхла „пырăшти“ теççĕ. Пырăштийе куракансем те нумай. Çырма хĕрринђе пурнакан Иван хĕлле, вăрмантан вутă турттарса таврăннă ђух, лаши мĕнĕпех вар тĕпне кайса вилсессĕн, çав вырăнта пĕрмай шăши йăкăртаса çўретђĕ, тет.

Йĕрсе ывăннă амăшĕ, темшĕн, Наçтук ђунне шăши йевĕрлĕ пултарасшăн мар.

— Кай, пысăккисен анђах апла пулаŤ вăл. Çылăх пуррисен анђах... Ађапăђа ђунĕ тўрех райа кайаŤ, тет.

— Ађапăђа çылăхлисенђенех çуралмасŤ-им вара? тесе хыттăн хушса хураŤ Тимуш ашшĕ.—Мĕн лăпăртататăн есĕ тата, тет.—Вилсессĕнех пурин ђунĕ те малтан, хĕрĕх кун иртиђђен, пырăшти пулса çўрет. Усалĕ те, хура йытă пек курăнса, ун хыççăн инçете йулмасŤ.

— Атте! Кĕçĕр килме пултараŤ-и апла хура йытă?

— ПултараŤ.

— Уй! Хăратăп епĕ çĕрте çывăрма.

Пўртре, ђăнах та, вăл самантра пит хăрушă пекле туйăнса кайаŤ. Сăмах-йумахсем илтĕнми пулаççĕ. Çĕр иртгерме пынă Униççе аппăшĕ çăм ђулхисене çыхмашкăн

пăрахаť. Тимуш амăшĕ, Настук ђунĕ ваљђи турăран çăмăллăх ыйтса, çĕре ўке-ўке пуççапаť. Турăш умĕнђе çунакан çуртана пырса тўрлетет. Унтан каллех сăх-сăхса илет... Ку тĕнђерен уйăрăлса кайнăскерĕн урăх вăранасси мĕнĕ сук: çавăн пекех лăпкă вăл, çавăн пекех канлĕ... канлĕ çывăраť. Ăна, тĕпел кукринђе, йури ăрасна вырăн туса панă. Çийелтен шурă пирпе витнĕ. Амăшĕ акă, çав пире пуç çинђен сирсе, сўннĕ куççене пăха-пăха ĕсĕклет. Ĕмĕрлĕхе çывăрма выртнăскере сăмахсем те каласа ђĕнет вăл. Анђах сўннĕ куççем урăх никама та курмаççĕ çав. Тепĕр хут уçăлса кăтартмаççĕ вĕсем. Амăшĕ вара ирĕксĕрех пăрахса кайаť вăл вырăнтан. Уçăп, Тимуш ашшĕ, пысăк алтуйи тытса, тула тухаť. Хура йытă пўртўмĕнђе-и, йе карташĕнђе лараť пулсан, тўрех çапса хуçаť ăна. Уй! Пушшех хăрамалла та-çке! Урайĕнђе шăши хаљ-хаљ ђупса çўрессĕнех туйăнаť. Таçта, вырăн çине пырса, аçам айнех те шăтарса кĕрĕ вăл. Çĕрте выртакан ађа çапла, пырăштирен шикленсе ларса, аçам аркине шалалла, хăй айнелле лайăхрах хĕстерсе ђикет. Пуççинђенех те витĕнсе пăхаť. Анђах, сывлама аван мар пирки, каллех уçса пăрахаť. Сак çинђе ђулха йĕпписемпе ларакансккере хыттăнах аптăратма пуçлаť.

— Униççе аппа! Йарса кăтарт-ха йумах.

— Ай, ађам, йурамасť кĕçĕр йумах йама.

— Мĕншĕн?.. Мĕншĕн йурамасť пултăр?

— Ав, Настук аппу вилсе выртаť. Макăрас килмест-и сан уншăн?

— Ну, нумай ан йар есĕ.

— Аннўрен ыйт. Вăл ђармасť пулсан...

— Анне! Ђармастăн вĕт?

— Ах, йарса кăтарт-ха çавна пĕр-иккĕшне.

Униççе аппăшĕ пуçлат каламашкăн. Тĕлĕнмелле, шутсăр та тĕлĕнмелле йумахсем пĕлет вăл. Хăй куçран йăвашрахскер, çип ункисене пĕр йĕп çинђен тепринпе çеклете-çеклете илсе, сăмахха ним такăнмасăр, шыв пек кăна йухтарса пырат. Пĕркеленђĕк пит-куçĕ вăл вăхăтра калама çук пит килĕшўллĕ выђат. Униççе—кађђа кайман вата хĕр. Шутсăр ђухăн çемйерен. Тимушсенђен те нађартарах пурнаççĕ. Анђах йумах йарас тĕлĕшрен кам çитет-ши Униççе аппăшне? Йалта урăх никам та çитеймĕ çав.

4.

Амăшĕ калакаланине хăлхана ђиксе лартса:

— Атте! Аппана ма лекĕр патне илсе каймарăн? тесе ыйтнă пĕђĕккĕскер.

Ашшĕ çавăнтах, çиленсе кайнă пек пулнă та, мăн сасăпа:

— Мĕн пĕлет вăл лекĕр тавраш? Ним ђухлĕ те пĕлмест. Турри хăй çапла вилме пўрнĕ-тĕк, ним те тăваймăн унта, тенĕ.

Амăшĕ пур пĕрех ўпкелешме ђарăнман.

— Тен, пĕлес çук ăна, хамăр аппаланнийех те, пĕр йенђен, йурамарĕ пулĕ çав. Ех!.. Хĕрĕ пит лайăхђĕ, хĕрĕ пит лайăх! тесе, пайан кун та хурланат хăйĕн Наçтукĕшĕн.

Тимуш пуçĕнђе тата, ўссе пысăклансассăн та манмалламарскер, ђи пĕђĕкрех ђухнехинђен тепĕр самант пит çирĕппĕн ларса йулнă. Тĕрĕссипе, вуник çул тултарни сисĕнкĕсĕр иртсе кайсан кайран та вăл самант нумайа, пит нумайа пынă. Ун çинђен есĕр, йуратнă шăллăмсем, çак калав пуçламăшĕнђе вуларăр та ĕнтĕ.

— Ах, ҫав... Тимуш амӑшӗн ҫӑмах пек сике-сике тулнӑ мӑкӑлҫсем ҫинҫен-и? Пӗҫӗк Маттӗрне шарт-шарт сиксе айхинҫен вӑранса кайнисем... ҫавсем-и, ӗ?

Пит тӗрӗс туйса илтӗр есӗр.

— Ҫавсем, ҫавсем.

Килне вилӗ пек ӳсӗр таврӑнакан ашшӗ акӑ Тимуш амӑшӗпе ним сӑлтавсӑрах йатлаҫма, ӑна хӗнеме тапратать. Уй-й! Ун пек ырӑ мар каҫсенҫе амӑшӗ хӑвӑртрах аҫиссене пуҫтарать те, пӳртрен тухса тарса, урӑх ҫӗрте ҫӗр каҫать. Пӗҫӗк Тимуш ҫулла ҫапла кил пахҫинҫе, хӑмла вырӑнҫе ҫывӑрать. Хӗлле амӑшпе пӗрле кӳрше мӑн кайать. Йе тата, пӳртре ашшӗ лӑпланса ҫывӑрса кайиҫҫен, тулта лупас айӗнҫех нумай вӑхӑт шӑнса-ҫӗтресе тӑрать. Пӗрреҫҫен вӑл, амӑшӗ ҫук ҫух, ӳсӗр ашшӗнҫен хӑранипе ҫаппа ҫарамас, ҫара уранӑн йур ҫинҫенех Хӗветле кумма амӑшӗсем патне ҫупса вӗҫтернӗ. Ӑна халҫ те манман.

— Пит хытӑ шӑнтӑм ҫавӑн ҫух! тесе каласа кӑтартать хӑйӗн ытарайми амӑшне.

— Пысӑклан-ха, ывӑлӑм! Пысӑклансан мӗн пулӗ... Аҫунтанах хӑрамӑпӑр ун ҫух, тет ывӑлне хирӗҫ амӑшӗ.

Ӑна илтсен, ывӑлӗ тӑрук вӑй илсе, ҫӳлелле хӑпартланса кайнӑ пек пулать. Хӑйне хӑй никамран та хӑраман паттӑр вырӑнне шутлама тытӑнать.

— Ӳсем... Вӑйланам... Вӗренем... Ҫын пулам, тесе каласшӑнах туйӑнать хӑйӗн ҫамрӑк та хӗрӳ шухӑшӗпе. Аҫа куҫӗсем йӑлтӑртата-йӑлтӑртата илеҫҫӗ.

Хӑй йепле, ӑҫта ҫурални ҫинҫен пӗҫӗккӗскер ҫавах ним те пӗлмен.

— Анне, кала-ха: епӗ ӑҫтан ҫуралнӑ? тесе ыйтсан, амӑшӗ пӗр вӑхӑтра ҫапла тыттарнӑ пулнӑ ӑна:

— Сана ҫӑлран туртса кӑларнӑ, тенӗ.

Пысăкланарахпă тин Тимуш ĕç йепле пулнине тă-нăшса çите пуçланă. Ахаљ татах та пĕлес çук. Пĕрре амăшĕ ăна, шуйхашнă каç хыççăнхи ир макăрса ларнă ђух, хăйех çав систернĕ.

— Сана та çак, ывлăм, вăрмантах çуратса пăрахрăм. Ун ђухне епĕ куккусем патне çимĕке кайма тухнăђђĕ. Аçу пымарĕ.—Епир килтех праçник тăватпăр. Кайах; кай! тесе, мăшкăласа йулђĕ сан усал аçу, тенĕ.

Çимĕк тĕлĕнђе, вăрманта çуралнă тесен, Тимуш йа-лан хавасланнă пек пулаť. Ăна çавăнтах вăрман пур-нăçĕ аса килет. Хăй мĕн çинђен шухăшланине лайăххăн тăна илмесĕрех, çамрăк ађа çаплалла каласа йараť:

— Вăрманта пурăнма пит аван пулмалла, тет.—Мĕн тĕрлĕ савăнăç çук унта! Йалтинђен çĕр хут та лайăх, тет.

Пуçра тĕслĕрен çавăн йышши шухăшсем вĕçме тап-ратаççĕ.

— Пысăклансассăн хамах вăрмана пўрт кайса лар-татăп. Пурнатпăр унта аннепе.. йăмăкпа. Атте кунтах йултăр. Ĕçтĕр. Кўпĕнтĕр. Питех кирлĕ мар вăл пире. Мĕншĕн епĕ халех пысăк пулман-ха? Халех куçаттăмăр вăрмана. Ђăнах лайăх пулĕ унта пурăнма? Пит лайăх пулĕ?..

Ку шухăшсене Тимуш пĕрре амăшне те систернĕ. Анђах амăшĕ, ђăтаймасăр, çавăнтах кулса йанă.

— Вăрманĕ пирĕн мар-çке. Мĕн тăвас-ха апла? Тата упа-кашкăртан, вăрă-хурахсенђен хăрамастăн-им есĕ?

— Хăрамастăп. Пăшал çук-им вĕсем вађђи.

— Пеме пĕлетни-ха?

— Вĕренетĕп,—тесе пит хăйуллăн каласа пынă амăш-не хирĕç.

Анђах вăрманĕ ђăнах вĕсен аллинђе мар пирки пĕђĕк паттăр пăртак шухăша кайнă.

5.

Шкула тăххăрта çÿре пуçланă. Шкула йарас ђухне пĕр ашшĕ кăна урлăрах пулнă.

— Мĕнле, кăçал ывăла вĕренме йамалла-и, йарас çук-и? Йарас пулсан, кайса çыртармалла пулĕ. Çынсем çыртараççĕ вĕт! тесен, амăшне хирĕç ашшĕ çапла каласа хунă çав:

— Хăť те мĕн ĕçле ађупа. Епĕ пĕлместĕп. Йарас пулсан—йар. Йамастăк ан йар. Маншăн пĕрех. Епĕ вĕренмен—пурăнатăп. Атти те, асатти те шкул алăкне уçса курман—çапах пурăннă, вилмен. Пĕлместĕп. Хăť те мĕн ĕçле, тенĕ.

Тимуш ашшĕ çине çавăнтах хытă çиленсе кайнă.

— Çынсен ашшĕсем йараççĕ. Манăн йарасшăн мар. Епĕ те пур пĕр кайатăп... Кайатăпах! тесе, пĕђĕк паттăр пекех, вăл хăйне хăй сăмах панă.

Амăшĕ,—ой, ырă та-çке амăшĕ!—пĕђĕк ывăлĕ майлă пулнă. Ађи ашшĕ йепле çынне аса илнĕ те вăл:

— Мĕн пулаť—çав пулĕ. Каллех ашшĕ пек усал ан пултăрах. Ађана шкула йаратăп. Ашшĕ хăť мĕн калатăр. Килти ĕçсене хамах тукаласа çитерĕп, тенĕ.

Тимуш ĕнтĕ виççĕмĕш çул вĕренет. Вырăсла çырнине аванах тăнăшаť. Хăйĕн кĕнекине уçкаламассеренех вара, пуринђен ытла, çаксене йурлама йуратаť:

Ей, дубинушка, ухнем!
Ей, зеленая сама пойдет, идет, нейдет,
Подернем, подернем да ухнем!..

Йе тата:

Идет, гудет зеленый шум,
Зеленый шум, весенний шум.

Йе татах:

По диким степям Забайкалья,
Где золото роют в горах,
Бродяга, судьбу проклиная,
Тащится с сумой на плечах...

„Песенник“-не çĕнĕ çулга хăйсем патне хăнана килнĕ куккăшĕсем панă укçапала илнĕ. Пушă вăхăтсенђе ăна аларан пăрахмасť. Пĕрмай хăй йуратнă вырăнсене йурласа çўрет. Кĕввисене те вăл хăйех шухăшласа кăларать.

6.

— Çăварни!.. Çăварни!—Çапла кăшкăрашать ађапăђа урамра.

Каç умĕн урам хушши тата хытă кĕрлеме тапратрĕ. Катађђи ђупакансем те, куракансем те шутсăр нумайланђĕç.

— Ђăнкăл-ђăнкăл! Ђăн-ђăн-н! ђăнкăлтатса та ташласа пыраççĕ йăнкăл-шăнкăрав сассисем.

— Хăнкăр-хăнкăр! хăнкăртаттараççĕ хулăм-уçă саслă хăнкăравсем.

— Ихик!.. А-йук!.. Кай, ан тив!.. Ђипер лар! тесе кулаççĕ шурă, кăвак, кĕрен тутăрлă, хура-сарă кĕрĕклĕ çăварни хĕрĕсем.

— Ей, Ваңук, йара пар! Ђуптар лайăхрах! теççĕ те кађђисем, çунасем çинђех хĕрсемпе выљама тапратаççĕ.

Акă пĕр кайри çуни çинђи хитре хĕрĕсем, хăйсем умĕнђе ђăпар çуналлă та лайăх лашаллă çамрăк йĕкĕтсем пынине курсан, çуна айăккисенелле пăха-пăхах йурлама тапратрĕç. Ытти çунасем те вара хуллентерех шума пуçларĕç. Çăварни лашисем, мăн кăмăлланнă пек пулса,

пуçĕсене тек сулла-сулла пыраççĕ. Шăнкăрав сассисем, паçăрхи кĕвве пăрахса, урăх кĕвĕпе ташша йаҫĕç. Йурлакан хĕрсене пĕтĕм шавлакан аслă урам тăрса итлет.

Анатран хăпарать ик хуркайăк, ик хуркайăк,
Тухса тулă сапсамăр! Сапсамăр!
Анатран хăпарать ик сар аҫа, ик сар аҫа,
Тухса алăк уçсамăр! Уçсамăр!

. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .

Атăл çинҫе хăмăш кашлать,
Мамăк вĕçет, мамăк вĕçет,—
Ҫун хурланать, куççуль йухать!
Шăпăр шăпăр çăмăр çăвать, çăмăр çăвать,
Ҫўреҫе виттĕр курăнать! Курăнать!
Пи ĕн ĕмĕр иртесси, иртесси
Виттĕр пăхсан курăнать! Курăнать!

Хĕрсем çапла йурлани урамран пўрте уççăнах илтĕнсе кĕҫĕ. Тимуш амăшне хăпартлантарса йаҫĕ.

— Тухса пăхсам, ывлăм! Урамя тухса пăх!..

Анҫах ывăлĕ, темшĕн, амăшне итлемерĕ. Урамалла сиввĕн çех пăхса илҫĕ. Ăшĕнҫе тата каларĕ:

— Тем парсан та тухмастăп. Çулла акă пулла кайатăп. Вăрманта çўретĕп. Çулла пултăр-ха, çулла...—терĕ.

Амăшĕ те, ывăлин шухăшне пĕлнĕ пек пулса, урăх шарламарĕ.

— Хăй çавăн пек ĕнтĕ манăн ывăл. Халăх выльанна, ҫўхеннĕ çĕре тухма йуратмасть. Çынсен аҫисем пек нихçан ашкăнса çўремест. Кĕнекипе пўртрех ларать... Те ашшĕ ырă маррийех ăна çынтан йутшăнма вĕрентрĕ. Пĕлместĕп. Ўссе çитĕнсен мĕнлескер пулĕ-ши тата, тесе шухăшлать амăшĕ хăйĕн ывăлĕ пирки.

## 7.

Аслă урам хайхи пушшех асса, выльанса карĕ. Катаҫҫи ҫупакансем пĕр йĕрпе çеç те мар, икĕ йĕрпе харăс, йунашар ăмăртмалла ҫупа пуçларĕç. Пĕр-пĕринҫен

аран-аран пăрăнса çитереççĕ. Çăварни йаш-кĕрĕмĕсемпе пĕрле ўсĕрсем те, халиђђен урамра курăнманскерсем, таçтан сиксе тухса, хăйсем майлă йурлама та кăшкăрма тапратрĕç.

— Ей! Йай-й! Ĕçер-и?.. Йурлар-и?.. Савăнар-и? Ех-х! тет пĕр ўсĕрĕ.

Тепри тата, çаппа çара пуçăн çул варринех тухса тăнă та, пĕтĕм иртен çунасене кăшкăрса хăратма тапратнă.

— Епĕр ка-а-а-м-м?.. Ђукмар Йаку ывăлĕ Иван, теççĕ пире. Пăрăнăр унтан! Çул парăр ăна!.. Çул парăр! тесе, çула урлă кармакланса хăлаçланса тăрать.

Кай йенђен пĕр лайăх пар пĕрĕхтерсе килет. Лашисем, çугă тимĕр-кăваксем, тытса ђармалла мар, çунатлă çĕлен пекех йавăнаççĕ. Пĕккисем çипе лайăх йышши ђакăр-симĕс тутăрсем çакса йанă. Çилхисене тĕрлĕ тĕслĕ хăйусемпе капăрлатса пĕгернĕ. Шăнкăравĕсем вĕрçĕн пек,—айакранах çутăлса пыраççĕ.

Халăх хушшинђен:

— Пуйан Митук хĕрĕсем килеççĕ. Курăр лайăхрах! тенĕ сасăсем илтĕнсе карĕç. Унтан та пулмин, вăрăм пушă: шарт! шартлатрĕ те, тахăш пĕри:

— Пăрăн! Пăрăн! Таптаса кайать вĕт! тесе кăшкăрса йађĕ.

Ўсĕр паттăр йăн-йан пăхкаларĕ. Пăрăнма мар, çаплипех лашасем айне таптанса кĕђĕ. Лашисем ђарăнмађĕç. Мĕнле ђупса килнĕ аплипех çын урлă каçса карĕç. Урам варринђе ђĕп ђĕрĕ хĕрлĕ йун сапаланса кайса, шурă йура хĕретсех пăрахнă çав. Йунлă вырăнта хайхи ўсĕр ури-аллисемпе тапаçланма хăтланать. Нумай та иртмест, йăнăшса ахлатни, усал сăмахсемпе вăрça-вăрçа ылханни çын ăшĕнђен асаплăн хирĕлсе тухать.

— Ай!.. Ай-й! Мурсе-е-е-м! Халерсе-е-м! тесе, пит хăрушла сасăпа çухăрат̆ паçăрхи паттăр.

Халăх çавăнтах йĕри тавра хупăрласа илет.

— Ей, Ђукмар ывăлĕ, ђутах вилеттĕн вĕт!

— Ђукмарпа та хăратаймарăн курăнат̆.

— Ара, вилет анђах. Ан кулăр унтан.

Йăнăшакан-çухăракан çыннăн сасси те, халăх шавлани те ђасах лăпланђĕç. Пит йăвăр аманнăскере, пĕрин çуни çине илсе вырттарса, килне турттарса карĕç. Ђўређе патĕнђе хăйĕн йурă кĕнекипе ларакан ађа, малтанах, тем пирки ара, темле... хĕпĕртесе йанă пек пулђĕ. Йунланса пĕтнĕ ўсĕре курнă-курманах вăл:

— Анне, пăх-халĕ! Урамра мĕн хăтланаççĕ? Есĕ тата мана унта кăларасшăн, терĕ.

Амăшне апла каласан, малтан хĕпĕртенĕ пек пулни çавăнтах таçта çухалђĕ. Тимуш каллех паçăрхи ађах пулса тăђĕ.

— Ех, пуйан тавраш! Мĕнле-ха лашисене ђармалла мар. Лаша вĕсен çеç мар вĕт. Ђармасан, ыттисен те таптама пултарат̆, терĕ, йулашкинђен, ним каласа йама пĕлмен амăшĕ.

Ывăлĕ ăна хăлхана ђикнĕ пек турĕ.

Анђах аслă урам йепле çĕмĕрĕлни, шуйхашни çине урăх çаврăнса та пăхмарĕ. Аслă урам мыскарине вăл тахçантанпах курнă пек, пĕлнĕ пек пулђĕ.

## 8.

Ђукмар Йаку Иванĕ виçĕ кунтан çўлти патшалăха кайнă. Унăн ўтне масар çине турттарса кайнине пирĕн Тимуш урама тухса тăрсах пăхнă. Тупăк хыççăн халăх пит сахал пынă. Хĕрарăмсенђен пĕр арăмĕ кăна ĕсĕкле-

ёсекле утнă. Тимушсен килĕ çумĕпе анакан урлă урама çитсе тухсан, çав тăлăха йулнă хĕрарăм, сасартăк çырма йеннелле ђарăнса тăнă та, такамсене шутсăр хытă, макăра-макăра ылханма тапратнă.

— Ман упăшкана пĕтерекенсем, тенĕ вăл.—Çаратса та çынсене лартса пуйнипе иртĕхсе кайнăскерсем!.. Мăйракаллă шуйттансем! Мана макăртнăшăн хăçан та пулсан хăвăрăн макăрмалла пултăр. Туррăн хайар çилли ӳктĕрех сирĕн çине. Ман ылханни хăçан та пулсан çиттĕрех. Çаратнипе ĕмĕр пуйан пулаймăр... Ĕмĕр кулаймăр çынсенђен! тенĕ Иван арăмĕ.

Вара каллех, тупăк лавĕнђен йулас мар тесе, хăвăрт-хăвăрт уттара панă. Ĕсĕклемешкĕн, такамсене ылханмашкăн çав çавах ђарăнман хăй.

Ăна куçпа пăхса тăрса ирттерсе йама çамрăк ађашăн темле, пит йăвăр туйăнса кайнă. Çăварнире урамра пысăк трамă пулнă иккенне ђи малтанхи хут лайăххăн ђухласа илђĕ вăл. Тăлăха йулнă Иван арăмĕ пуйан Миťук килне ылханнине те çавăнтах пĕлсе илнĕ.

Мĕнле-ха апла? Амăшĕ те çавнашкал каламасť-и вара: Миťук вăрттăн-вăрттăн çаратса, йӳнĕ хакпа çуксенђен çĕр тара илсе, кантуртисене кӳптерсе пуйнă вăл, тесе? Хăш ђух, çырма хĕрринђи пуйан çинђен сăмахйумах тапратсан, амăшĕ те çавăн пекех калаť çав. Çавăн пекех!..

Ђукмар Йаку Иванĕ арăмĕн çав тем-те-пĕр сунакан ылханлă сăмаххисем ђăнах тĕрĕс пулсассăн... Ой, вĕсем тĕрĕсси пирки хапха умĕнђе тăракан ађа урăх иккĕленмест ĕнтĕ! Вăл сăмахсем ăна сасартăк хăратса, çӳçентерсе йараççĕ. Çавăнтах пуйан Миťук сăнĕ таçтан ун умне тухса тăраť. Тимуш вăл сăна пит лайăх кураť:

ытла пысăках мар, çи-пуçĕ йака, куçĕсем хĕсĕкрех те ђейен çутăла-çутăла илеççĕ. Ăçтан хăватлă пултăр-ха ку çын? Кĕрешсессĕн такам та çĕнсе пăрахмалла ăна. Арăмĕпе ађисене илестĕк, вĕсем те ытлашши вăйлăскерсем пулас çук. Çапах та, çынсем тем пирки, теме кура пит хăраççĕ вĕсенђен. Хирĕç мĕн пулсан, ырă йатпа ђĕнсе, çĕлĕк илеççĕ. Пуç тайаççĕ. Тем пек йăпăлтатаççĕ. Анђах, халлапа йанă çĕрте Миťук килĕнђисем пĕри те пулман вăхăтра, çав ыррăн пуç тайакан çынсемех лешсенђен тăрăхласа кулма, вĕсене çиме-кăшлама тытăнаççĕ. Хăйсем йуратманнине шатах палăртаççĕ вара. Çамрăк ађа ăна та асăрханă. Мĕн пирки апла пулса тăнине вăл нумайђђен ним те ăнланайман.

Ун шухăшĕпе çапла тухнă: çынсем куç умĕнђе нихçан пĕр-пĕрне тĕрĕссине каламаççĕ. Йалан суйма та тĕрĕссине пытарма тăрăшаççĕ. Куç хыçĕнђе тин тĕрĕсрех каланăн туйăнаť.

9.

Çынсем мĕн пирки апла хăтланаççĕ-ха? Сăмахран, Миťук çинех акă мĕншĕн тĕрлĕ ђух тĕрлĕ пăхаççĕ?

«Пуйан... Пуйан Миťук... Пуйса кайнă... Çукка ăçтан хисеплетђĕр ара вĕсем?»

Ку сăмахсене çамрăк ађа илткеленĕ. Акă ĕнтĕ хайхи пĕлмен йапаласене карса тăракан тĕттĕм ђаршав тинех уçăлса илнĕ пек пулаť.

Тимуш тинех хăйне хăй пĕр йунăшмасăр çапла тавăрса калама пултараť: çав „пуйан" тенипе „çук" тени çынсене хирĕçтерет иккен! Çавăн пирки пуђ ара пуртараххисемпе çуккисем пĕр-пĕринпе нихçан ђĕререн калаçмаççĕ. Çавăн пиркийех акă хăй мулĕпе иртĕхекен-мухта-

накан Мит̆укăн çутă, тимĕр-кăвак лашисем Ђукмар Йаку Иванне ним хисеплемесĕр таптаса, урлах каçса карĕç.

Тимуш тата хытăрах çӳçенсе илет.

— Йепле аттене таптаса кайман вĕсем? тесе ыйтат̆ хăйĕнђен хăй.

Ахаљ ђух ашшĕне йуратмансккер, хаљ ăна хĕрхеннĕ пек пулат̆. Пуçа пĕрре пырса кĕнĕ ырă мар шухăш çаплах пĕр вырăнта çавăрăнса тăрат̆ унăн.

— Пуйан лашисем пур çуксене те çавăн пек таптаса, каçса кайастăк... мĕн тума пулат̆-ха вара?

Тăнлăскер, çавăнтах пур пуйансем çине те тарăхса кайат̆. Çынсем хушшинђе унашкал тĕрĕс мар йĕрке пуррине хăй тĕллĕнех ђухласа-сиссе илет те, ун пирки акă такама хытах çиленме пуçлат̆. Анђах, çапах та, пĕтĕм ăс-вăйне, кĕлеткене йăвăрлатакан, пуслăх пекех пусакан йапала çинђе çамрăк пуç ытла нумай ђарăнса тăмаст̆. Ђасрах хăтăласшăн унтан...

Карташĕнђен çунашка туртса кăларат̆ те, çырмана йарăнма вĕçтерет. Каçпала ађапăђа темĕн ђухлĕ йарăнакан. Тантăшсемпе пĕрле пит лайăх-çке кунта! Ђăн-ђăн ирĕк çав, ђăн-ђăн савăнăç!..

## 10.

Малтан турă саккунне вĕренмелли урок пулат̆. Ађасем, урокĕнђен ытла, вăрăм çӳçлĕ, вăрăм тумтирлĕ, кађака сухаллă, хайар ђакăр куçлă, пĕрĕнђĕк çамкаллă, ђăсланка, хыткан пађăшкăран пит хăраççĕ. Унтан хăранипе пурте малтанах ђĕтресе тăраççĕ.

Акă клас алăкĕ уçăлђĕ.

— Хайхи усал... вăрăм çӳç кĕрет, терĕ пĕри шăппăн, Тимуш хыçĕнђех тăраканскер.

Аҫасем пурте капăртаткаласа ура ҫине тăҫĕҫ.

— Тешурнăй! Ҫиттай ҫару́ непеснăй. Кто ҫехотҫă тешурнăй? тет паҫăшкăн ҫиллĕ сасси.

Тешурнăй, ҫи хыҫалта ларакан кĕҫĕллĕ, шатраллă вăрăм аҫа, ҫĕре ӳкернĕ кăранташне илмешкĕн парттă айнелле пуҫне ҫикнĕ те, йерипеп мĕшĕлтеткелесе ура ҫине тăрать.

— Ҫару́ непеснăй уттешит... утеш...—тесе, пĕр иквиҫ вырăнта аташкаласа, аран ирхи кĕлле каласа парать. Хăй сахалтан пĕр вăтăр-вăтăрпиллĕк хут сăх-сăхса илет.

Паҫăшкă, тешурнăй ҫине пăхса тăрса, ҫиленсе карĕ. Пит-ҫăмартисене хĕретсе йаҫĕ. Сĕтел хушшинҫен тăрук ура ҫине сиксе тăҫĕ те, ним сăмах-мĕн ҫĕнмесĕр, аҫасене сивĕ куҫĕсемпе шăтара-шăтара, шăртлана пуҫланă ҫӳҫне шăм турапа йакаткаласа, урай тăрăх тек каллĕ-маллĕ уткалама тапратрĕ. Класри аҫасем пурте ăшĕсенҫе:

— Манран ыйтмасан йурĕҫҫĕ... Ах, манран ан ыйттăрҫҫĕ, тесе ҫĕтресе лараҫҫĕ.

Класра кам пуррине-ҫуккине тĕрĕслесе пĕтерсен, паҫăшкă тапратрĕ кам иртнĕ вырсарни кун ҫиркĕве пыманнисене айăплама.

— Ваҫҫилйĕв Крикори, мĕншĕн ҫиркӳре пулман?

— Атте сывмар пулнă. Килте кирлĕ пулнă.

— На колени, никуҭай! Аҫуна сансăр пуҫне те пăхакан пулнă. Таса ҫиркӳрен йулмалла мар. Турăран хăраса пурăнма вĕренмелле. Макҫимăв Ҫемйон, мĕншĕн пулман-ха?

— Аттесем вăрмана вутă турттарма кайнă. Мана килтен пăрахса кайма хушман.

— Тошĕ на колени. Каврилăвă Алексантрă?

— Анне йамарĕ. Пăртак ирĕкрех кун ҫип ҫума кайса килер, терĕ.

Санкка йађĕ тухсан, Тимуш, темшĕн, пађăшкă çине хытах тарăхса карĕ. Ой, тăшманах мĕн пирĕн пађăшкă! Ађасене каласа пĕтерме те памасť çав.

— Оççиппăв Тимофей! Мĕншĕн ĕлĕкхи вырсарни кун, пăлхавăшни праçникĕнђе, ђиркӳре пулман?

Тимуш, пăлхавăшни иртсен тепĕр кунне, шкула кайман. Çавăнпа та вăл халĕ: ăна манса та кайнă пулĕ-ха, тесе шухăшланă.

— Пыма май килмен, терĕ вăл ытла та хăйуллăн. Ун пек халиђђен нихçан каламан.

Ађасем ăна тĕлĕнсе пăхса илђĕç. Пађăшкă малтанах ним тавăрса калама аптрарĕ. Хăйнех темле, лайăх мар пек пулђĕ пулас. Çутă-хура сăнлă ађа ăна пăртак хытăрахах тивретрĕ çав. Пĕтĕм клас çапла çурри ытла пађăшкăн хайар суђĕ аллине кĕрсе ӳкрĕ. Хăшне ђĕркуççи çине лартнă. Хăшĕ тата, сахалтарах „çылăхлисем“, ура çинђех тăраççĕ.

Тимуш ђĕркуççи çинђе ларať. Ун патĕнђех, çтена çумĕнђе, Санккан пански ђулхаллă, шурă пир тăлаллă хитре урисем çамрăк, çăмăл кĕлеткине тӳп тӳрĕ тытса тăраççĕ.

## 11.

— Петров Иван! Ну-кă „Ђарӳ непеснăй“ каласа пар.

Пађăшкă хăйне хăй ирĕксĕрлесе тулашĕнђен çемçе кăмăллă пек пулђĕ те, йури сăнамаллах, вĕренекен ађасенђен тешурнăй лайăххăн каласа парайман ирхи кĕлле ыйтма тытăнђĕ. Парттă хушшисенђен хаљ пĕр ађи, хаљ тепри, хаљ тата тепри, тăваттăмăшĕ, пиллĕкĕмĕшĕ,—и-и! пурте ура çине тăрса пуçĕсене уса-уса йађĕç. Пĕри те пĕлекен çук.

„Айăпланнисем“ те пађăшкăна хирĕç ним ђĕнмеççĕ. Класра шăпăрт... Пађăшкă ађасене питрен çупа-çупа йарас патнех çитрĕ. Ним тăваймаст̆. Атă кĕллисене пĕтĕм вăйпа шат-шат! шатлаттарса утса çўрет. Ађасене хăтăрса та, кăшкăрса та пăрахат̆.

— Пĕри те пулсан каламĕç-ши? тесе, кăшт йăвашланнă пек пулат̆. Çуллă çăвар тутисемпе йăпăлтатма тапратат̆.

— Тăр, Тимофей! Каласа пар çав тăманасене.

Тимуш, ђăнах та, пађăшкăна ытлашши уртарас мар тесе, ирхи кĕлле пĕр йунăшмасăр каласа парат̆.

— Каврилăвă Алексантрă! Тепĕр хут каласа пар. Есир (ытти ађасене калат̆ ĕнтĕ) лайăхрах итлĕр! тет.

Санкка та аван каласа панине курсан, Тимуш каллех хĕпĕртенĕ пек пулђĕ. Хăмађ кĕпеллĕ те шурă тутăрлăскер ăна пуринђен те лайăх хĕр ађа пек туйăна пуçларĕ.

Пађăшкă, татах йури сăнамалла, ытгисенђен те çавнах тепĕр хут ыйтма тытăнђĕ. Ађасем çаплах пĕри те ђĕнмеççĕ. Çав çавах, паçăрхин пекех тăраççĕ.

Пађăшкăн ђакма пуçланă çилли ђасах çĕнĕрен капланса, тулса çитрĕ. Кайри парттă патне пырса тăђĕ те, пĕр вунтăват çулхи пысăк ађанах çўçрен йарса тытса лăскама пуçларĕ. Ађан пуçне ђиперех парттă çине çатлаттара-çатлаттара илет çав.

— Сăмсуна тасатаймастăн, ўссессĕн те çав çавах... *ђăвашах пулат ĕнтĕ ванран*, тесе хирет хайхи ађана. Унтан куçĕсене хĕскелесе витлеме тытăнат̆[1]).

---

[1]) Хăшĕсем калаççĕ: ун пек усал пупах çук, пулман, теççĕ. Анђах вăл пупа (пађăшкăна) ман пуç шухăшласа кăларман, ăна епĕ хам пурнăçран илнĕ. Вăл пуп пайан кун та пурнат̆. Анђах халь ĕлĕкхи мар ĕнтĕ: ђылай йăвашланнă, ђăвашсенђен йĕрĕнмест, тăрăхламаст̆. Вĕсемпе килĕштерсе, çулланса пурăнма тăрăшат̆ халь. Ђейелĕхĕ пит пысăк вара, ĕлĕкхийех. Çыракан.

— Çапах та, каçхине Йекор Павăлђ вĕрентнине итлеме çӳретĕн пулĕ-ха, хăлыђ! Найан!..—тата тем те каласа хăртса тăкаť. Сăмаххисем тăрăх пĕрре те ђиркӳ çынни, турра çывăх тăраканскер, тесе каламалла мар ăна.

Пĕтĕм клас çĕнĕрен ђĕтреме пуçларĕ.

Тимуш та сасартăк хăрана йерђĕ. Ађасене, пуринђен ытла, пађăшкă Йекор Павăлђ йађĕпе теме систерсе, теме тĕртсе калани аван мар пек туйăнђĕ.

12.

— Ђăнкăр-ђăнкăр-р-р! ђăнкăртаттарса илет кориторта. Урок пĕтрĕ. Ађасем пурте çăмăллăн сывласа йађĕç. Хăшĕ пĕри, куçсене çĕрелле ђалăштарса, пĕр-пĕринпе вăрттăн кула-кула илме те хăтланаççĕ. У-у! Урса çитнĕ пађăшкă татах лăпланмасť. Тимушпа Санккасăр пуçне, пĕтĕм класри ађана пурне те, салтаксене стройа тăратнă пек, ђи хыçалти парттăсем хушшинђен пуçласа алăк патне çитиђђенех, пĕр ĕрет тăратса тухрĕ те, алăка йарии уçса пăрахрĕ.

— Марш!.. Марш-ш!.. тесе, сылтăм аллипе сулла-сулла, хăмсара-хăмсара ађасене коритоталла кăларса йађĕ.

Класра Тимушпа Санкка иккĕшех тăрса йулђĕç Хайар пађăшкă вĕсене тултан шалт! хупса лартрĕ. Шала йулнисем, тĕлĕнсе хытса кайнăскерсем, пĕрне-пĕри куçран тĕллесерех пăхса илђĕç. Апла пăхни иккĕшне те, темле, лайăх мар пек пулђĕ. Çавăнтах тата иккĕшĕ те, вăйлă аслатиллĕ çăмăр хыççăн çамрăкланса йулакан хĕвел пек, кăмăллăн кулса йађĕç.

13.

Каç пулсассăн Тимуш каллех шкула ђуптарђĕ. Алăка хуллен уçса, вĕрентекен пӳлĕмне кĕђĕ. Йекор Павăлђ

шалта тёттёмрех ҫей ёҫсе ларать. Шилетпеле. Шилет айёнҫе—шурӑ пасар кёпи. Атӑ тӑхӑннӑ урисене сётел айнелле ҫӑсса йанӑ. Вёренекен аҫа алӑк ҫумёнҫен хӑпса малалла пёр утӑм йарса пуссассӑн тин Йекор Павӑлҫ, ҫейне ёҫме пӑрахса, ҫак тултан кёрсе тӑнӑ пёҫёк ҫын патнелле васкаса утса пыҫё.

— А-а, Тимофей килнё ҫке, терё.—Ирт тёпеле. Ак ҫей тултарса парам сана... Ну, систертён-и?

— Систертём. Анҫах, Йекор Павӑлҫ...

— Мён тата?

— Паҫӑшкӑ пайан, сирён йата асӑнса, темскер тёртсе каларё.

— Пёлетёп... Пирён паҫӑшкӑ—тӑшман вӑл.

Вёрентекенпе вёренекен аҫан малтанхи сӑмахёсем ҫав-сем пулҫёҫ. Йекор Павӑлҫ вӑйлӑ ҫутатакан лампине ҫутса йаҫё. Кантӑксене карса лартрё. Алӑк ҫеклетмеллине те ҫеклетрё. Унтан, пёҫёк ҫыннӑн ёҫесси килмен ҫёртенех, ӑна пысӑк сахӑр катӑкё йарса ҫей тултарса паҫё. Унаш-кал амёш те нихҫан ёҫтермен. Тата вёсен килте сӑма-вар та ҫук. Мунҫа хыҫҫӑн йе шӑнсассӑн сайра хутра хуран ҫакса вёреткелеҫҫё. Хамиҫнӑй ҫей вырӑнне сарӑ тӑрӑллӑ матрӳшке курӑк йараҫҫё. Сахӑра амӑшё вара пёҫёккён-пёҫёккён катса ёҫме вёрентет... Тимуш ҫей ҫашкине, хёррисенҫен ик алӑпа та пит асӑрханса тытса, тути патнелле илсе пыҫё. Ытла пёҫертнё пирки, кӑшт астивсе пӑхсассӑнах, кайалла лартрё.

Йекор Павӑлҫ ҫав хушӑра, кёнекесемпе тулнӑ етта-шеркки патёнҫе, темскер пӑтраштарма тапратрё. Хыт хупӑллӑ пысӑк тетрать туртса кӑларса странитсисене уҫ-каласа хупать. Сарлака та мӑнӑ пуҫне хӑй ҫёрелле пёш-кёртнё. Куҫ хупанкисем, йаланхи пекех, васкамасӑр сик-

келесе тăраççĕ. Вĕсен айĕпе таса, çырă куçсем калама çук пит ăслăн пăхаççĕ çав. Тимуш ăна çĕр хут та асăрханă. Вĕрентекенĕн куçĕсене те шутсăр хытă йуратса лартнă вăл! Хаххулла усăнтарса йанă хура усси тата Йекор Павăлђ сăнне пăртак сиввĕн пекле кăтартаť. Анђах Тимуш ăна та тахçанах хăнăхса çитнĕ: хăй çав тери савнă çынра килĕшмелле мар йапала ним те тупман вăл. Ним те.

Ђей ђашкине ак çĕнĕрен тута патне илсе пыђĕ. Татах вĕрискере, хуллен кăна вĕре-вĕре сивĕтсе, ĕçме тытăнђĕ. Ĕçнĕ хушăра Тимуш пуçне сасартăк çакăн пек шухăш пырса кĕђĕ: мĕнле кунта ларатăп-ха епĕ? тесе тĕлĕне пуçларĕ çак. Мĕншĕн Йекор Павăлђ ăна ытти ађасенђен ытларах йуратаť-ха? Ăçти çын-ши вăл хăй? Кунтан хĕрĕхпилĕк çухрăмрисем теççĕ. Анђах мĕнле йалне Тимуш пĕлеймест. Ун пирки вĕрентекенрен ыйтса пĕлме халиђђен те хăйайман вăл. Хăйса ыйтас тесе темиçе хут хатĕрленсен те, çаплах иртгерсе йанă. Уншăн вара хăйне хăй тарăхма, хăйне нађара хума тытăнаť. Йекор Павăлђ, калăпăр, ăна тем пек йуратнă, Тимуш хăй те лайăх вĕренекен шутĕнђе хисепленнĕ. Анђах хăйуллăх çитейменни, çынтан именесси унăн ђылайа, пит ђылайа пынă. Килти çемйе пурнăçĕ пĕртте илемлĕ марри, ђăваш халăхĕ йăвăр пусмăрта тăни ађа ўсессинђе те хытах палăрнă çав!.. Ей, тарса кайасђĕ ак ирĕк çĕре! Вăрмантах ав пит ирĕк пулмалла.—Анђах вăрманĕ пирĕн алăра мар-çке, тесе калаť тата амăшĕ.

Кун çинђе те Тимуш, çав хăй хăйаймасăр тăнине сĕнтерес шутпа, вĕрентекенĕн йалĕ пирки ыйтса пĕлме хатĕрленсех çитнĕђђĕ ĕнтĕ. Сăмах ђĕлхе вĕçнех тухса тăнăђђĕ. Çук. Пулаймарĕ вĕт. Хăйса çитни ађана, хăй

шухăшланине мар, урăххине тутарђĕ: сăмавар краннĕ пăрђĕ те, Тимуш хăйех хăйне вађђи тепĕр курка вĕри шыв тултарђĕ Çавăнтах вара çăмăллăн сывласа илђĕ.

— Тимофей! Есĕ лар-ха. Ыйтмасăр никама та ан кўрг, терĕ те вĕрентекен, хăй çывăракан йунашар тĕттĕм пўлĕме кĕрсе çухалђĕ.

— Йурать, терĕ ăна хирĕç Тимуш.

Хăйне, çавăнтах тата, вĕрентекен йунашар пўлĕмрен темскер илсе тухассăнах туйăнса карĕ. Çав „темскер" пит хăватлă йапала пулмалла. Анђах мĕн-ши вăл? Ах, пĕлесђĕ ăна...

Ађа умне çавăнтах шутсăр нумай пĕлекен çын сăнĕ тухса тăрать. Вăл—вĕрентекен ĕнтĕ. Шкулта вăрттăн пухусем пуçтарса тем тума, пурнăçа та улăштарса йама шутлакансĕкер. Униççе аппăшĕ калакан йумахсенђи паттăрсем пекех. Асаймăçсенђен те ытларах пултарать-тăр... Тĕлĕнмелле! Тимуша вăл вăрттăн пухусенђе пулмашкăн йепле ђармасть-ха? Йепле киле хăвалса йамасть? Ах, шанать те çав ăна. Тата, пысăк çынсем хушшинђе пулсассăн та, Тимуш мĕн пĕлет вĕсен ĕçне? Вĕрентекен каласа çўреме хушманнине вăл пур пĕр никама та каламасть.

## 14.

Алăка тахăшĕ шаккать.

— Кам?

— Уксак салтак.

Туйаланса Хĕветĕр кĕрет. Вăрăм, çамрăк çын. Иаппун вăрçинђе аманнă. Алăкран кĕнĕ ђух такăнма тăрать.

— Ех, çĕр çăтман влаçĕсем: урасăр турĕç мурсем.

— Тĕрĕс калатăн, терĕ ăна хирĕç Йекор Павăлђ.

— Ҫавăнпа та кĕрĕс-с! тутармалла вĕсене, тет шутник Хĕветĕр.

Тимуш сĕтел вĕҫĕнђе „Хыпар“ хаҫат тытнă та, Палтти тинĕсĕ патĕнђи халăхсем—латтышсем, естонсем, литвасем улпутсен ҫĕрне туртса илесшĕн пăлханни ҫинђен вуласа парат̆. *«Пусмрса ҫӳрекен салтаксем 25 ҫын персе вĕлернĕ»* тесе ҫыпăҫтарса кăларат̆ ђĕтĕрекен ҫамрăк сассипе.

— Молотетс Тимуш! Аван вулатăн.

— Йекор Павăлђ! Тимуша сан ху патăнтах усрас пулат̆. Тăнлă ађа вĕт!.. Йепле пулăшат̆ вăл пире, тет уксак салтак.

— Тивес мар. Ун ашшĕ-амĕш пур, тет вĕрентекен. Алăкран тата икĕ ҫын кĕреҫҫĕ. Вăй-питтискерсем, ўссиллĕскерсем.

— Пурне те ырă каҫ тума сунатпăр.

— Страшникĕ майри ҫумĕнђех выртмалла пултăр! тет каллех шутник Хĕветĕр.

Ыттисем кулаҫҫĕ.

— Майри ҫумĕнђе выртмаст̆ вăл. Кĕҫĕр пуйан Мит̆ук патне ĕҫме кĕрсе карĕ, тесе сăмах хушат̆ хаљ кĕнисенђен пĕри. Унтан татах иккĕн кĕреҫҫĕ. Ђылай ҫула ҫитнĕ хресђенсем. Тăла пиншаксемпе, пир туллă алсасемпе.

— Ну, пурте пухăнђĕҫ пулас.

— Пурте... Кала, Йекор Павăлђ: епир итлекенĕсем пулăпăр.

— Мĕн ҫĕнĕ хыпар тавраш илтĕнет-ха Раҫҫей ҫĕрĕнђе? тесе ыйгрĕ ак кайран кĕнĕ пĕр арҫынĕ.

Тимуш аллинђи хаҫата пăрахрĕ. Вăл вĕрентекен каланине итлеме хатĕрленет. Вăл кунта пухăннă ҫынсене пурне те пĕлет. Лешсем те ăна пĕлеҫҫĕ. Ыттисем

калаçнă ђухне Тимуш сăмах мĕн хушмасť. Хăйне хăй çапах ађа пекех тытаť çав. Ађан ĕçĕ—вĕренесси, çитĕнниййĕн—вĕрентесси. Тимуш пысăккисене итлесе, ăс пухса кăна лараť. Çамрăкскер, апла пулсан та, вĕрентекене ăçта май килнĕ унтах пулăшасшăн. Вĕрентекен пĕр-пĕр ĕç хушсан, сăмахран, çак каçах акă страшник йе урăх йутран сын тăрук килсе кĕни-кĕменнине пăхма тула тухса тăмашкăн каласан, Тимуш пĕр сăмахсăрах, ним хăрамасăр-тумасăр тула тухса тăраť. Ытла та кулăшлаçке! Аллинђе ун алтуйи пулаť. Такама çапса хăратасшăн унпала. Çапла, уйăх çутипеле, шкул тавра пĕђĕк паттăр пек уткаласа çаврăнаť. Уйра шурă йур тĕксĕм çуттăн çуталса выртаť. Çырмара çӳçе-йăмрасем шухăша кайнă майлă пит шăппăн лараççĕ. Тимуш та акă шухăша кайаť. Анђах мĕн çинђен шухăшлаť-ха çак пĕђĕк çын? Ой, шухăшсем нумай унăн.

— Атте кĕçĕр каллех таçтан ӳсĕр таврăнмасť-ши? тет вăл ђас-ђасах.—Аннене хĕнемест-ши?.. Вĕрентекен калаť: çĕрпе ирĕкшĕн... халăх пурнăçне аванлатассишĕн пурин те хытă тăмалла, тет. Темле пĕлмелле мар сăмахсем асăнаť çав: револђутси... сотсиал-револђутсионер... респуплĕк... пăлхав, т. ыт. те. Вĕрентекен каланине лайăхрах итлесђĕ. Ахăр, шутсăр нумай пĕлет-тăр вăл... Ӳсесђĕ те, манăн та ун пек пуласђĕ, тет.

## 15.

Тепĕр ирхине хĕвел вăрман тăрне пысăк хĕрлĕ çăмха пек кусса тухрĕ. Çутă пайăркисем тӳрех шкул çине, шкул хӳмми çине ӳкрĕç. Çерçисем ирхи хĕвеле хӳмме çинђе ташласа хапăл тăваççĕ. Шкул ађисем те ирхи хĕвел ăшшинђе сиккелесе кăна выђаççĕ,—ним хуйхăсăр,

ним шухăшсăр çавăнаççĕ. Анђах, çапаҫ та, ађасем çавăнасси ку кун нумайа пымарĕ. Вĕсенђен тахăш пĕри, шăппăнтарах каласа, усал хыпăр пĕлтернĕ.

— Ей, ăтсемĕр... ăтсемĕр! страшниксем... пăшаллă, хĕçлĕ страшниксем килеççĕ.

Страшниксем, ђăнах та, йал старастипеле шкул патне вĕçтерсе те çитрĕç. Тӳрех шкула кĕрсе карĕç. Вĕсем хыççăн ађасем те кĕмешкĕн кĕпĕрленсе пынăђђĕ. Лешсем йамарĕç. Ађасем вара пĕр çĕре пуçтарăнса кăн-н! хытса тăђĕç. Çулпа Тимуш килет.

— Тимуш, Тимуш!.. Шкулта страшниксем.

— Ђăнах-и?

— Ђăнах. Пире кӳртмеççĕ унта.

Пĕђĕк паттăр çавăнтах пуçне усрĕ. Пуçĕнђе темскер кăлтăртатса, ыраттарса кайнă пекех туйăнђĕ. Вĕрентекене путех тытма килнĕ пулĕ, ахăр. Анђах кам калань-ши? Пађăшкă çурђĕ йеннелле çавăрăнса пăхсан, Тимуш курах карĕ: пахђана тухмалли пĕђĕк калитки уçах; пађăшкă хĕрĕ çав калиткерен тек шкул йеннелле туха-туха пăхат. Мĕн кирлĕ ăна? Ахăр, ку ĕçе çавсемех туман-ши?.. Страшниксем—пурĕ вĕсем виççĕн—вĕрентекене шкултан илсе тухрĕç.

— Ша-а-кăм марш-ш! терĕç те, ăна кантур çулĕпе илсе карĕç. Тимуш лайăххăн курса та йулаймарĕ. Вĕрентекен те, ађасем çинелле пăхса, пĕр ăшă сăмах каламарĕ. Вĕт халăх, хăраса лартса, ним пĕлмесĕрех тăрса йулђĕ. Стараста килсене саланма хушрĕ. Пађăшкă халђ çемйи мĕнĕпех, пахђана тухса тăрса, вĕрентекене усал куçсемпе ăсатса йанине Тимуш пит аван асăрхарĕ.

— Пропался! терĕ мăнтăр майри.

— Мошенник! терĕ вăрăм çӳçĕ.

Ытти аҫасем ӑна лайӑххӑн илтеймерӗҫ. Вӗсем вӗрентекене страшниксем илсе кайнине нумайҫҫен пӑхса йулҫӗҫ. Нумайӗшӗ уй хапхи патне ҫитех карӗҫ... Усал куҫсем хайар суннине пӗр Тимуш кӑна пит аван курҫӗ.

16.

Кантӑкран кӑвак ҫутӑ кӗрсессӗн, Тимуш сасартӑк вӑранса вырӑн ҫине тӑрса ларҫӗ. Амӑшӗ: Мӗн пулҫӗ сана? Ма ирех тӑрса лартӑн? Ҫывӑр! терӗ ӑйхине ҫӗненҫи туса. Ывӑлӗ амӑшне васканӑ-хӑранӑ сасӑпа каласа йаҫӗ: Тӗлӗк... Анне, тӗлӗк куртӑм, терӗ. Амӑшӗ ӑна илтмӗш пулҫӗ. Вӑл ҫасах тепӗр хут ҫывӑрса карӗ. Ҫемйипех урайӗнҫе ҫывӑраҫҫӗ. Ашшӗ пӗр хӗрринҫе: харрр! харрр! харлаттарса ҫывӑрать. Апла харлаттарнине ывӑлӗ йуратмасть. Харлаттарса ҫывӑракан ҫынна курсан, Тимуш йаланах ӳсӗр ашшӗне аса илет. Ӳсӗр ашшӗ! Ӑйхинҫе те ӳсрипе аташнӑннах туйӑнать. Харрр! харрр! харлаттарать.

Вӑранса ларнӑ аҫан шухӑшсем пӗр вырӑнта тӑмаҫҫӗ. Шухӑшсем йкӗ ҫулпа сапаланса кайасшӑн. Урлӑ сак айӗнҫи тӗттӗм ҫӗре пӑхать те, Тимуш хӑй тӗлӗкне ҫӗнӗрен курма хӑтланать. Ашшӗ харлаттарнине итлеме тӑрать те, тӗлӗк ҫавӑнтах таҫта ҫухалать. Ӑна хӑваласа та тытмалла мар. Анҫах пӗр-пӗр хӳри тӑрса йулать йулатех. Ҫав хӳререн йарса тытсан, таракан тӗлӗке те тинех тытса ҫаратӑн.

Тимуш ку ҫӗр интереснӑй тӗлӗк курнӑ. Санккапа иккӗшӗ кантур йалне кайнӑ пек ҫав. Унта вӗсем вӗрентекене хупса лартнӑ вырӑна шыраса тупаҫҫӗ. Йекор Павӑлҫ мунҫа ҫӳреҫи йевӗрлӗ пӗҫӗк шӑтӑкран, темшӗн, кусем ҫинелле пит хӗпӗртесе пӑхать. И-и! Мӗнле-ха апла!

Вĕрентекен акă шкултах... хăй хваттерĕнђех... Шилетпеле. Шилет айĕнђе—шурă пасар кĕпи. Атăпа. Тем, пит тарăн шухăша кайса, пўлĕмĕнђе тек каллĕ-маллĕ уткаласа çўрет. Санкка та унтах акă. Анђах, тем çинђен... тем шутсăр пысăк ĕç çинђен хытă шухăшласа, пуçне хытă çĕмĕрсе утакан Йекор Павăлђ малтанах Тимуша та, Санккана та курмасť çав. Утнă ђух куçĕсем... таса пит ăслă куçĕсем çўлелле пĭхса пыраççĕ. Ахаљ те илемлĕ пĕтĕрсе лартнă хура уссине сылтăм алли пўрнисем тата пит хитрелентерсе пĕтĕре-пĕтĕре илеççĕ. Пĕр сарлака пысăк çамки кăна ăраснах сиввĕн кăтартаť мĕн. Çамкине кура Тимушпа Санкка çавăнтах вĕрентекенрен хăрама тапратаççĕ. Анђах куçĕсем çав-çавах ырă, çав-çавах ытармалла мар... çынна хĕрхенерех паракан ăшă куççем. Тимуш вĕсенђен пĕртте хăрамасť.

— Йекор Павăлђ! тесе ђĕнет вăл, тăрук хăйулланса кайса.

— Аа, Тимофей... Каврилăвă Алексантрă! тесе, тинех сасă параť хайхи тĕлĕкри çын.

Хăй урай варринђе тăп ђарăнса тăрса, темле, ытла та кулăшла карăнкаласа кăтартаť. Пĕртте ахаљ ђухнехи пек тыткаламасť хăйне хăй. Калаçасса та ађасемпе пысăккисемпе калаçнă майлă калаçаť.

— Иртĕр, иртĕр тĕпеле. Мĕн алăк патĕнђе тăратăр? Акă епĕ сире „Хыпар“ хаçат вуласа паратăп, кĕнексем...—тет.

Ађасем сĕтел умнелле пыраççĕ. Йекор Павăлђ ђăнах та вулама тытăнаť.—«Раççей çĕрĕнђе самана лăпкă мар» тесе илтĕнет акă унăн уçă кăна та йалanхи пекех кăмăллă сасси: - «хапрăкри ĕçлекенсем... çĕрĕçпе пурна-

кан хура халăх, ирĕклĕ пурнăç тăвас тесе, унта-кунтах пăлханаççĕ... Хура халăх тăшманĕсем — çĕрулпуђĕсем, хуçасем, ђиновнĕк-пўрократсем... страшник-шантармери таврашĕсем пăшал пуђккисене хĕрхенмеççĕ. Хура халăха йун айне тăвасшăн... Пĕтĕм Раççей çĕрĕпе хĕрлĕ йун йавăнат».

Çапла сăмахсем тухаççĕ вĕрентекенĕн çăварĕнђен. Ахаљ ђух вĕсене пирĕн Тимуш „вăрттăн пухура" анђах илтме пултарнă. Тĕлĕкре те çав сăмахсенех илтнинђен шутсăр та тĕлĕнмелле-çке ара. Тата, пуринђен ытла, Йекор Павăлђ вăл сăмахсене пĕр Тимушпа Санккана иккĕшне çех вуласа пани пушшех хытă шухăшлаттарнă... Вĕрентекен пўлĕмĕ вырăнне тĕлĕкре акă тем аслăш, вĕçĕ-хĕрри пăхса курăнман Раççей çĕрĕ пулат-тăрат. Йекор Павăлђ, Тимуш, тата Санкка—виççĕшĕ пĕрле—сасартăк йалтан йала, хуларан хулана, вăрмансене, сăрт-тусене, йухан шывсене хыçа тăрата-тăрата хăварса, кайăксем пекех вĕçме пуçлаççĕ. Хăш çĕрте шызри пулăсем йевĕрлĕ йарăна-йарăна илеççĕ. Хăш çĕрте тата, тусем урлă каçнă ђух, тăвата уран та утса пăхаççĕ, хырăмпа та шăваççĕ... упаленеççĕ. Хăш çĕрте калама çук хăвăрт пĕр вырăнтан тепĕр вырăна сике-сике ўкеççĕ, хăш çĕрте вара пит асапланма, вăй нумай хума тивет. Раççей хулисем, хапрăк-савăђĕсем, ђаплă тăвĕсем кĕнекере ўкере-ўкере кăтартнă манерлех иккен. Пур çĕрте те, ăçта çитнĕ унтах, хура халăх пурнăç нађар пирки пăлханат. Хăйĕн тăшманĕсемпе паттăрăн тытăçсах çапăçат... Акă хирти аслă улăх тăрăх, таçтан çав терийех пухăнма пултарса, хĕрлĕ шыв йевĕрлĕ йапала кĕрлесе килет. Йун! . Йун!.. Ой, хăрушă та-çке! Тимуш хытă çухăрсах вăранса кайат.

17.

Пĕрре пӳргре нумайăн халлапласа ларђĕç. Крахйан аппапа Кĕркури пиђђи иккĕшĕ те пынă çав. Тимуш ашшĕ те ыттисемпе пĕрле хĕпĕртесе, шутсем тăва-тăвах пуплерĕ.

— Есир илгни çак? тесе йађĕ халлапласан-халлапласан Крахйан аппи:—пирĕн йал уђитли тĕрмерен тарнă та, çак таврарах çӳрет пулаť. Ђăнах-ши вăл?

— Ђăнах теççĕ ара. Куракансем те пулнă. Пĕђђен кăна çӳрçмест, тет. Тепĕр йулташĕпе, тет.

— Ну-у! тесе тĕлĕнсе илђĕ Тимуш амăшĕ.

Кĕркури пиђђи татах та тĕлĕнмеллисем каласа пађĕ. Ун сăмаххипе çаплалла тухаť: Йекор Павăлђ йалта пурăннă ђухнехинђен ђылай улшăннă мĕн, сухалланса кайнă, çӳç-пуçĕ ахаљ мушикĕнни манерлех, ђăваш сăкманĕпе, çăпатапах... Тимуш кăна шутсăр та пит тинкерсе итлерĕ.

— Ђăнах. Пит те тĕлĕнмелле ĕçсем пула пуçларĕç. Мĕн кирлĕ-ха çав халăха пăтраштарса çӳрекен çынсене?.. Ђортсем майлах пулмалла вĕсем! тесе кулмалларах каласа хуђĕ ак ашшĕ. Йулашки вăхăталла вăл та политтĕккă çинђен шухăшлама тытăннă. Хаљ те çав, кăмака çумĕнђе ђĕлĕм тĕтĕмне илемлĕн мăкăрлантарса тăрса, хĕрсех калаçаť мĕн.

— Пурнăç ытла йăвăр. Самани те çавнашкалах-тăр, тесе каларĕ Тимуш амăшĕ.

— Стутентсем вĕсем мĕн ĕлĕкренех çапла хăтланаççĕ. Салтакра ђухнех нумай илтсеђђĕ, терĕ тата Кĕркури пиђђи.

— Ара, пурте стутентсăсем мар пулĕ-çке унта. Пирĕн уђитли те ак...—терĕ Крахйан аппи.

— Халӑх хӑй иртӗнсе кайнӑ. Пурне те патак кирлӗ. Патак!.. Вара тӑпа кӗрӗҫ тин, терӗ каллех Тимуш ашшӗ. Анҫах, темшӗн, хӑй каласа йанине хӑй ӗненмен пек, сӑмахсене ҫӑвартан ҫемҫереххӗн сирпӗнтерсе кӑларҫӗ. Ҫавӑнпа, пурте пӗр харӑс тытӑнса, ахӑлтатса ҫех илҫӗҫ унтан.

— Пӗтӗм халӑха хӗнемелле тӑвас-тӑк, хӗнекенӗ кам пулӗ-ши?

— Сана, Уҫӑп, хӑвна та хӗнес пулат-тӑр ун ҫух?

— Хӗнемелле ҫав...

— Тарса ҫӳрекенскер апла пирӗн йала та кӗрсе кайнӑ пуљ-ха?

— Ее, уҫитлӗ-и...

— Ара, ҫавӑн ҫинҫен тапратрӑмӑр-ҫке.

— Кам пӗлет ӑна. Кӗнӗ те пуљ.

— Курасҫӗ пӗрре хамӑрӑн вӗрентекене. Йепле ҫӳрет-ши вӑл.

— Ҫӗнмесӗр лар ҫак есӗ, Тимуш!.. Мӗн пӗлен пысӑккисем калаҫнине, тесе ҫарса лартрӗ амӑшӗ.

— Тух унтан, сӗтел хушшинҫен! тесе ҫавӑнтах тата хыттӑн кӑшкӑрса пӑрахрӗ ашшӗ.—Тулта сире ваљљи пит ирӗк ав, терӗ.

— Ан тивӗр ывӑлӑра. Лартӑрах-ҫке, итлесси килет-тӗк, тесе Крахйан аппи ҫех хута кӗҫӗ.

Аҫа вара ашшӗпе амӑшне иккӗшне те ҫиленнӗ пек пулҫӗ. Ҫиленнипех карташваррине тухса тӑҫӗ. «Тарӑхтармӑшсем!» терӗ хӑй ӑшӗнҫе. Ҫамрӑксене апла пӳле-пӳле лартмашкӑн пысӑккисен мӗнле ӑрасна права пултӑр-ха вӑл? Тӗрӗс-и тата вӗсем апла хӑтланни? Тимуш хӑйӗн йуратнӑ вӗрентекенӗ пирки мӗнле те пулсан ӑшӑ сӑмах... вӗрентекене тӳрре кӑларакан, ӑна ирӗксӗрех

хисеплеттерекен пĕр-ик сăмах та пулсан хушса хума хатĕрленнĕђђĕ. Анђах мĕнех калĕђђĕ-ши апла вăл? Е?.. Мĕн тупса калама пултартăр çамрăк ађа? Ой, çынтанах ыйтмĕђђĕ ăна! Каламалли хăйĕннех пурђђĕ унăн: «пирĕн вĕрентекен хура халăхшăн тăрăшакан çын». Çапла персе йарасах тенĕђђĕ ĕнтĕ. Çапла каламах та пултарнă вăл. Мĕншĕн тесен, унашкал сăмахсене Тимуш вĕрентекенрен хăйĕнђен, хăй ытти çывăх çынĕсемпе калаçнă вăхăтра пĕрре çех мар хăлхана ђикнĕ. Анђах пысăккисем ăнакăна сисмен çав.

— Вĕрентекене курасђĕ хаљ. Йĕпле курас-ши ăна? тесе çаплах шухăшлат вăл. Çакăн хыççăн вара ку шухăш ађа пуçне кунĕн-çĕрĕн çĕмĕрсе тăнă.

18.

Пасар кунĕ халăх хушшине лайăхрах пăхмасăр, асăрхамасăр, кашнинех куçран тĕлле-тĕлле ларгса ирттерсе йамасăр ниçта та хăвармаҥ. Пуçтарса çӳрекенсем тĕл пулсассăн, вĕсене те пит хытă сăнанă. Ђас-ђасах тата йĕтем хыçне туха-туха ларнă. Уй çулĕсемпе таçта çити, пĕр ĕçсĕрех уга-уга кайнă. Кайсан-кайсан, пĕр-пĕр çеремлĕ выртăнта, куççене пĕлĕт çинелле пăхтарса выртнă. Сывлăшра та çапла темскере курма, теме палласа илме хăтланнă. Анђах хăйне кирлине, хăй шыранă çынна Тимуш пур пĕр ниçта та тупайман. Ниçта та курма пулман ăна. Ађа вара килелле пит ывăнса таврăннă. Пысăккисем халлаплани пирки те ђип-ђиперех иккĕленме тапратнă.

— Ахаљ пĕлмесĕр калаçаççĕ вĕсем? Вĕрентекен апла вăрттăн çӳремест те-и, тен,—тесе шухăшланă хăй тĕллĕнех. Анђах, темтусассăн та, ик-виç уйăх иртнĕ хыççăн çĕнĕрен илтĕннĕ йата.. йуратнă йата...пит пысăк хисепре

тăракаnскере тепĕр хут манăçа хăварма нийепле те пулман. Тимуш вара çаплалла ыйтнă хăйĕнђен хăй:

— Ђăнах çӳрет пулсассăн, мĕн ĕçпе апла çӳрет-ха тата? тенĕ —Йекор Павăлђ мĕн пирки хăйне паллаттарасшăн мар? Кам-ши унăн тепĕр йулташĕ?.. И-и, пĕлтĕм хайхи: страшниксем тыгасран урăхла тумланнă пулмалла. Çавăнпах. Урăх нимшĕн те мар... Ах, ниушлĕ пĕре те пулмасť ăна курма? Курсассăн пĕр сăмах та усмĕ-ши мана? Хăйĕн йуратнă вĕренекенне? Е?..—тесе çаплах ыйтнă хăйĕнђен хăй.

Вăрçăран амаnса таврăннă Хĕветĕр салтака таçтан сасартăк астуса илнĕ. Унпа пĕрле вара йалти тата тепĕр пилĕк-улт çын сăнĕсем умма сике-сике тухнă. Çавсем— Йекор Павăлђпа пĕр каварлăскерсем, тет. Тимуш вĕсене хăй те пит лайăх пĕлет. Хĕллехи каçсем—вĕрентекен ђĕнме йарсассăн—ђĕнме кайман-им çавсем патне? Хаљ курас та ыйтас ак пĕринђен те пулсан,—çук, каламĕç ăна.—Пĕђиккĕ хаљ ес, тейĕç. Çавăнпа ку шухăша ирĕксĕрех пăрахмалла пулнă.

Ађа çапла, хăйĕн вĕрентекенĕ çинђен çĕнĕ хыпар илтнĕренпе, пĕртте лăпкă пурнăçпа пурнайман: çынсем ăçта каласма пуçтарăнса тăраççĕ, Тимуш та унга ђупса пыраť. Пĕрмай темскер шыранă вăл, çав темскере... пысăккисем те нумайăн пухăна-пухăна çеç ăнланса илме тăрăшнине ку пĕр пĕђђен пĕлсе çитересшĕн пек тухнă. Пĕр пĕђђенех шăршласа çӳренĕ çав...

— Тимуш! Аťа ыран пулла кайăпăр, тесе ђĕннĕ кăна пĕрре йулташĕсем.

— Кайагпăр! тенĕ хĕпĕргесех вĕсене хирĕç. Тинех хайхи пăртак пусăрăннă пек пулнă. Ађасемпе вара кунĕ-кунĕпе пулăра иртгернĕ.

19.

«Акитаттăр!»

Йалта акă çавăн пек çĕнĕ сăмах сарăлнă. Мĕне пĕлтерег-ха ку сăмах? Вĕрентекенех каламаççĕ-ши апла?.. Ара, ун çинђенех каласçĕ вĕт сынсем: акитаттăр пулса çÿрет, теççĕ. Ку çĕнĕ сăмах çамрăк ађана пуçран тытса силленĕ пекех силлесе илет: темле, пит хăрушла йапалан туйăнса кайаť çав!.. Тепре тата, хăрушă та мар, пите ăшшăн-ађашшăн çех тиверткелесе хăвараť. Вĕрентекене каллех шутсăр хытă курас килекен пулса тăраť. Пулă тытакан ађа акă йĕри тавралла çĕнĕрен пăхкалама пуçлаť:—Ав, сăртсем хушшинђе пытанса лармаççĕ-ши? тет.—Акă çак утар çырминђен сиксе тухмаççĕ-ши?.. Леререх тата вăрмана пĕр паллакан çул кĕрсе кайаť. Вĕрентекенсем вĕрманга вăл çул çинђе мар-ши хаљ?—Ах, пĕлеймест çав Тимуш: хăй шыранă çынĕсем ăçтине нийепле те пĕлме пултараймасť.

Çапах та, вĕсем кунтах, çывăхрах пулассăн туйăннă. Вĕсем инçетре çÿреме кирлĕ мар. Йекор Павăлђ хăйĕн шкулне килсе пăхмасăр йепле тўстĕр-ха!..

20.

Тимуш кĕтни, ђăнах та, ахалех пулман: вĕрентекенне курнă-курнах вăл. Анђах мĕнле пулнă-ха ку? Вăрмана ашшĕпе мĕн тума кайнăђђĕ-ха çавăн ђух? Çăка каснă çĕре-и, йе урăх ĕçпеле? Е-е, тинех астуса илет хайхи касна вăрманне мар, халăх вăрманне ăвăс касма кайнă пулнă вăл кун. Йăвăç çулçисем пит лайăх сарăлса çитнĕ вăхăт çав. Курăк та калама çук вăйлă ашкăрса ларнă. Ђеђексене тем тĕрлисене те тата-тата шăршланă... Канђ-канђ! канђлаттарса тăнă пуртă сасси. Шатăр-шатăр,

ша-а-а-тă-р! кайа-кайа ўкнĕ йаштака ăвăссем. Халăх хĕрсе ĕçленĕ. Çав хушăра сасартăк:

— Акитаттăрсем килнĕ! Пăрахăр ĕçлеме!.. Акитаттăрсем сăмах каласшăн. Ей, халăх! Йĕркеллĕ пулăр: ђасрах пуçтарăнăр! тесе, пит уçă сасăпа кăшкăрса йанă пĕри. Кайран пĕлнĕ тăрăх, çав кăшкăраканĕ Йăмра йалĕнђи револютсилле ушкăнра тăраканскер пулнă мĕн.

Халăх хăвăртах пуçтарăнаť. Анђах,—ой, тарăхмаллаçке те!—пĕђĕккисене пысăккисем хăйсем патне йахăн та пыртарасшăн мар. Тимуш, ыттисене лайăх астăваймасассăн та, ăна пит аван астăваť.

— Вĕт халăх, хĕрарăмсем! Урапасем патĕнђен ан кайăр есир.

— Лашасене куçран ан йарăр.

— Ей, сире калаççĕ!.. Ăçта ђупатăр пирĕн хыçран? тесе, кăшкăра-кăшкăра пăрахнă пысăккисем.

— Ак тата.. мĕн пуххи апла? текелесе, ашшĕ те çырма хĕрнелле уттарнă. Тимуш ăна пит аван астăваť.

— Вĕрентекене мĕнле курасђĕ! Мĕнле курасђĕ ăна! тесе çухăрса йанă вăл хăй тĕллĕнех.

Туратлă çамрăк ăвăс çине йăпăр-йапăр хăпарса кайнă та, унтан тек халăх ăшнелле пăхма тапратнă. Хура виђкĕн куçĕсем вара ђасах палласа илнĕ: вĕрентекенех ку, вĕрентекенех!.. Çырма тайлăмĕнђе ўсекен хурама çумĕнђе тĕршĕнсе тăраť. Ой, мĕнле улшăннă мĕн Йекор Павăлђ! Тумĕнђен пăхсан палламалла та мар çав. Çăпатапах. Тăла пиншакпала. Пуçĕнђе—кивĕ картус. Ђăнах, мĕнле-ха вăл апла çўрет? Ăçта-ши тепĕр йулташĕ тата? Иккĕн теççĕ вĕт вĕсене... Ав, сылтăмарах тăраканĕ пулас... Вĕрентекен халăха темскер калаť: сасси пĕртте улшăнман, ĕлĕкхийех, уçă та кăмăллăскер, хыттăнгарах

та хĕрӳллĕрех илтĕнсе килет. Анҫах мĕн калаӗ-ха вăл? Пурнăç çинҫен... И-и, нумай та тăмасӗ, халăх шавлама пуçлаӗ. Сăмахсем çиллĕн туха-туха кайса сирпĕнеççĕ. Ăвăс тăрринҫе ларакан аҫа çавăнтах хăрана йерет. Ҫĕтреме тытăнаӗ. Ҫасрах сиксе анаӗ çĕр çине.

— Кантуртисене сирлĕтмелле! тесе кăшкăраӗ тахăш пĕри.

— Стăршинана тытса пĕрре хытă енселес пулаӗ! тесе йарса илет çавăнтах тепри.

— Пуçлăхсем çын вырăнне хуми пулҫĕç пире.

— Тĕрĕс!..

— Куланайсем тӳсмелле мар хураççĕ.

— А, çав... хосугарствĕннăй тумăрз (патшалăх пуххинҫе) мĕн турĕç-ха унта, е?

— Хура халăх ыйтнине пĕрне те туман, тесе ăнланатараӗ хайхи вĕрентекенĕн йулгашĕ.

Çиллĕ те хайар сăмахсем çапла ҫылайҫҫен çĕмрĕлсе тăнă. Вăрман ăшĕнҫен шăнкăртатса анакан пĕҫĕк шыв тăрăх таçта çигех уççăн илтĕне илтĕне кайнă. Пĕр-пĕр усал шухăшлă çын, пĕр-пĕр вăрттăн итлесе çӳрекенскер айакранах пит лайăх итлеме пултарнă. Анҫах халăх ăна-кăна шутламан. Вăл çав-çавах такамсене хайар суннă, такамсене вăрçнă... Акитаттăрсем тата пушшĕ çунатлантарса йанă пек пулнă.

Тимуш хăрама пăрахнă.

Халăх хушшинҫе ӳссе пысăкланакан вăй çамрăк аҫана та çавăрса илнĕ. Çамрăк аҫа сасартăк темскере, çĕнĕ йапалана кĕтме тытăннă. Мĕн пулаӗ-ха вăл çĕнĕскер? Ах, тем пулсассăн та, вăл—пит лайăхскер пулĕ. Ăна ав пĕтĕм хура халăх кĕтет...

21.

Ăвăс каснă çĕртен улăха çил пек тарса тухнă. Лашана астăвасси мĕнĕ таçта кайса кĕнĕ унта. Ой, лаша çинђен шутланă-и ун ђухне?.. Тимуш хăй йепле ђĕррĕн тăрса йулнă ̧ав. Йурат̆—урисем пĕре те такăнман, ахаљ тен çакланнă та пулĕђђĕ.

— Мĕн пулнă апла, Тимуш?.. Мĕн пăшал пени илтĕнђĕ унта? тесе ыйтнă улăх хĕрринђе пăру çитерекен Санкка.

— Халăха страшниксем хупăрласа илнĕ. Пит нумайăн çав! тесе, хашка-хашка каласа кăтартнă Тимуш. Хăй, хăранипе, пит хытă сиксе ђĕтренĕ. Ун майăн вара Санккапала тепĕр хĕр ађа та вилес пек хăраса йанă.

— Вĕрентекене куртăм! тесе пĕлтернĕ хашкама ђарăнмасăрах.

— Ђăнах-и? тесе ыйтнă хĕр ађасем харăс.

— Ђăнах çав!

— Ай, Тимуш, пăх-хаљ: çулпала ав темле ушкăн пырат̆, тесе çухăрса йанă Санкки.

— Страшниксем!.. Çынсене тытса кайаççĕ. Каллех пирĕн вĕрентекене тытман-ши? Епĕ вар пуçĕпе тухса пăхам-ха.

— Вилмешкĕн-и? Кай, ан ухмахлан.

— Вĕсем патнех пымастăп епĕ,—тенĕ те, Тимуш каллех тем шухăшпа малаллах ђуптарнă. Ђупсан-ђупсан, пĕђĕк вар хушшинђе тата тепĕр ик ађана хăваласа çитнĕ. Вĕсемпе вара хăйуллăрах ђупса кайнă. Страшниксенђен ытлах хăрама пăрахнă.

Страшниксем патне тухасси çур çухрăм ђухлĕ йулсассăн, ађасем тăпах ђарăнса тăнă: тытса кайакансем хушшинђе акитаттăрсене иккĕшне те курса йанă вĕсем.

— Палласа илтĕр-и вĕ[illegible]текене? Варринђерех пы рат̆ ав, тесе, куçпа тĕлле-тĕлле кăтартнă Тимуш.

— Куртăмăр. Çавах пулмалла, тесе календ ытти ик ађи.

— Санккасене кайса пĕлтерес, тенĕ ку хăй ăшĕнђе. Çавăнтах тата ăвăслăха, ашшĕ патне кайалла ђуптармалли çинђен астуса илнĕ.

— Ей, ат̆семĕр, манăн ăвăслăха таврăнмалла! тенĕ те, кайалла такăна-такăнах вĕçтернĕ.

Вар пуçнелле пĕр виç-тăват çын утса килнĕ. Иккĕшĕ—пуртăсем хĕстернĕ, пĕри—хулпуççи çине пăђкă хунă, тепри—уксак салтак... шутник Хĕветĕр. Кусем Тимуша курман пекех иртсе кайаççĕ. Хĕветĕрĕ аллисене ђăмăрласах пырат̆. Страшниксене тем те пĕр каласа вăрçат̆ çав. Ăна кура, Тимуша акă страшниксем пĕрре хăрушă пек, тепре тата хăрушă та мар пек туйăнса кайаççĕ... Санккасем урăх вырăна куçса ларнă. Вĕсем патне çитмесĕрех, Тимуш ђеђексем нумай çĕре ђăсăлса вырта т̆ те, кăвак пĕлĕтелле пăхма тапратат̆.

— Килте пĕр аннене каласа парам ĕнтĕ, тесе малтанах шутласа хурат̆.—Ђăнах хăрамалла-и çав страшниксенђен йе хăрама та кирлĕ мар? тесе, çаплах пĕђĕк пуçне çĕмĕрет.

Шутсăр ывăнса çитнипе, хăй те сисмест, ăйхăлат̆кайат̆. Тĕлĕк курат̆. Йаппун вăрçинђен аманса килнĕ Хĕветĕр страшниксемпе пĕђђенех пит хытă çапăçат̆ пек. Халăх Хĕветĕр майлă çав...

## Хумма Çеменĕ (Ђĕкеç Ç.) çырнисенђен:

**Комсомол калавĕсем.** Сутăнса пĕтнĕпе пĕрех.

**Выçлăх çулсем.** Повĕç. Сутăнса пĕтнĕ.

**Йурă-сăвăсем.** Сутăнса пĕтнĕ.

**Тимуш**—çырса пĕтерне повĕçрен, хаљ çапăнса тухрĕ.

## ШУРНАЛ-ХАÇАТСЕНЂЕ ÇАПĂННИСЕНЂЕН:

**Тутарла ђăваш**—„Канашра" тухнă, унтан Н. И. Шелепи тутарла куçарса Хусанта çаптарнă.

**Шишкă.** Саттир („Сунтал"-ра). Аçтăрхан хаçатĕнђе „Коммунист"-ра вырăсла çапăннă. М. Ф. Юрьев куçарнă.

**„Стантсăра"**—пĕђĕк роман („Сунтал"-ра).

**Варвари.** Пйессă („Сунтал"ра).

**Аңукпа Ваңук.** Пйессă („Сунтал-ра").

**Тинĕс çинђе.** Ођђĕрк („Сунтал"-ра), тата ытти те.

Хакĕ 30 пус.
Цена 30 коп.